Муркаш район хаҫачӗ

# Ҫӗнтерӳ ялавӗ

1944 ҫулхи майӑн 5-мӗшӗнчепе тухать

95-96 (7626-7627) №№ ✻ Шӑмат кун, 2008 ҫулхи ноябрӗн (чӳк) 29-мӗшӗ ✻ Хакӗ ирӗклӗ

## Ноябрӗн 30-мӗшӗ – Амӑшӗсен кунӗ

**ХИСЕПЛӖ АННЕМӖРСЕМ!**

Сире Амӑшӗсен кунӗ ячӗпе чун-чӗререн саламлатӑп.

Ҫӗр ҫинче аннерен хаклӑраххи, сывӑхраххи никам та ҫук. Эсир ачӑрсене пурнӑҫ парнелетӗр, мӗн ӗмӗр тӑршшӗпех вӗсемшӗн ҫунатӑр, вӗсем телейлӗ пулччӑр тесе тӑрӑшатӑр. Мӗнпе танлаштарма пулать-ши аннен таса юратӑвне, иксӗлми ырӑ кӑмӑлне? Эпир ҫирӗп умӑрта ӗмӗр татайми парӑмра: пире ҫуратнӑшӑн, юратнӑшӑн, ятланӑшӑн, ҫын тунӑшӑн.

Юратнӑ аннесем! Эсир – пурнӑҫ илемӗ, ҫемье ӑшши те, ҫути те. Вӗҫсӗр-хӗрсӗр ачашлӑх кашни ачӑр валлиех ҫитет сирӗн. Пӗр канӑҫ курмасӑр эсир ывӑл-хӗрӗрсене пурнӑҫ ҫулӗ ҫине кӑларассишӗн тӑрӑшатӑр, ҫӗр-шыва юрӑхлӑ ҫынсем тӑватӑр. Вӗсене мӗн ачаран йывӑрлӑхсене ҫӗнтерме вӗрентетӗр, пулӑшатӑр, вӑй паратӑр, хавхалантаратӑр. Таймапуҫ сире, аннемӗрсем, эсир пурришӗн, ытарайми ырӑ кӑмӑлӑрпа чун илемӗшӗн, чӑтӑмлӑхӑрпа ҫирӗп кӑмӑлӑршӑн. Эсир ачӑрсене тӗрӗс воспитани парса ӳстернипе пӗрлех кулленхи тӑрӑшуллӑ ӗҫре район, республика, ҫӗр-шыв экономикине ҫирӗплететӗр. Тавах сире ҫакӑншӑн.

Сире пурне те ҫирӗп сывлӑх, телейлӗ те вӑрӑм кун-ҫул сунатӑп. Ҫӗр ҫинчи мирлӗ пурнӑҫ сирӗн чӗрене лӑпкӑлӑх кӳтӗр. Ачӑрсем телейлӗ пулсан, эсир те телейлӗ. Апла пулсан вӗсен пурнӑҫ ҫулӗ те уҫӑлсах пытӑр. Ывӑл-хӗрӗрсемпе мӑнукӑрсем ялан савӑнӑҫ кӳччӗр, вӗсен уссине курмалла пултӑр.

**Район пуҫлӑхӗ Ю.А. ИВАНОВ.**



*Юнкӑ ял тӑрӑхӗнчи Лариса Павловна Краснова тата Мария Павловна Толстова (сӑн ӳкерчӗкре варринчисем) – тӑватӑ ача амӑшӗсем. Ҫак ырӑ кӑмӑллӑ хӗрарӑмсем халӗ тивӗҫлӗ канура, ачисем те ҫунаттисем айӗнчен вӗҫсе тухнӑ ӗнтӗ. Анчах маларах ачисене тӗрӗс воспитани панипе пӗрлех вӗсем хӑйсен ӗҫ вырӑнӗсенче те ӑста специалистсем пулса нумай тӑрӑшнӑ.*

*Галина Ивановна Ермаковапа Эльвира Леонидовна Новикован (сӑн ӳкерчӗкре хӗррисем) та пурнӑҫӗсенче пӗр пеклӗх пур. Вӗсем Юнкӑ тата Чуманкасси ял тӑрӑхӗсенчи специалистсем. Ҫемйисенче икшер ача пахса ӳстересҫӗ, опытлӑ амӑшӗсен сӗнӳ-канашӗсене пурнӑҫра усӑ курма тӑрӑшасҫӗ.*

**Н. НИКОЛАЕВА**
**сӑн ӳкерчӗкӗ.**

## Йыхрав

### Черетлӗ 30-мӗш лару

Депутатсен районти Пухӑвӗн 30-мӗш ларӑвне декабрӗн 5-мӗшӗнче райадминистрацин ларусен залӗнче 10 сехетре ирттерме палӑртнӑ. Кун пирки Пуху ертӳҫи И.В. Николаев ятарлӑ хушу кӑларнӑ.

Кун йӗркинче:

1.Муркаш районӗн 2009 ҫулхи экономикӑпа социаллӑ пурнӑҫ аталанӑвӗн прогнозӗ ҫинчен.

2.Муркаш районӗн 2009 ҫулхи бюджечӗ ҫинчен.

Ларӑва ял тӑрӑхӗсен пуҫлӑхӗсене, предприятисен, учрежденисен, организацисен ертӳҫисене, райадминистрацин ответлӑ ӗҫченӗсене, ҫамрӑксен парламенчӗн представителӗсене чӗнеҫҫӗ.

## Йышӑнусем

### Пушар хӑрушсӑрлӑхӗшӗн

Район администрацийӗн пуҫлӑхӗ 2008 ҫулхи ноябрӗн 20-мӗшӗнче 663 № ятарлӑ йышӑну кӑларнӑ. Сӑмах кунта экономика объекчӗсемпе пурӑнмалли ҫурт-йӗре кӗркуннехи–хӗллехи тапхӑрта пушар хӑрушсӑрлӑхӗпе тивӗҫтерессипирки пырать.

Предприятисемпе организацисен тата учрежденисен ертӳҫисене пушар хӑрушсӑрлӑхӗ тӗлӗшпе тимлӗрех пулма, экономика объекчӗсене пушар хӑрушсӑрлӑхӗн нормисене тивӗҫтернипе тӗрӗслесе тухма, электрохуҫалӑха профилактика юсавӗ туса ирттерме тата техника тӗлӗшӗнчен пахса тӑрассине йӗркелеме сӗннӗ.

Предприятисемпе организацисен тата учрежденисен, ялсен территорийӗсенчи шыв илмелли вырӑнсене, гидрантсене тӗрӗслесе тухмалла.

Профилактика ӗҫӗсене туса ирттерме комиссисем йӗркелемелле, вӗсене дружинниксене, старостӑсене, депутатсене, штатра тӑман пушар инспекторӗсене, районти пушар часӗн ӗҫченӗсене кӗртмелле.

Хӗллехи вӑхӑтра ял хуҫалӑх предприятийӗсен ертӳҫисемпе ҫыхӑнса ялсенче ҫулсене, шыв патне пымалли вырӑнсене юртан тасатассине йӗркелемелле.

Ял хуҫалӑх предприятийӗсен ертӳҫисем тӗлӗшпе асӑрхаттарусем пур. Пушар машинисене юсавлӑ тытмалла, ҫунтармалли-сӗрмелли материалсем ҫителӗклӗ пулмалла.

Хӗллехи вӑхӑтра бульдозерсемпе ҫулсене уҫассине йӗркелемелле. Кочегарсене, котельнӑйсен операторӗсене пушар хӑрушсӑрлӑхӗн правилисене вӗрентмелле, квалификаци удостоверенийӗсем памалла.

### Шывсем ҫинче инкексем ан пулччӑр

Район администрацийӗн пуҫлӑхӗн ноябрӗн 20-мӗшӗнче кӑларнӑ 662 № йышӑнӑвӗнче ҫынсене кӗркуннехи–хӗллехи вӑхӑтра шывсем ҫинче пулакан инкексенчен асӑрхаттарасси пирки сӑмах пырать. Ял тӑрӑхӗсен пуҫлӑхӗсене хӑйсен территорийӗсенче хӑрушлӑх кӑларса тӑратакан вырӑнсене палӑртма тата вӗсене ятарлӑ знаксемпе паллӑ тума, пӑр айӗнчен пулӑ тытакансем валли вырӑнсен палӑртма, пӑр урлӑ каҫмалли палӑртман вырӑнсене шута илме, каҫмалли ятарлӑ вырӑнсене палӑртма сӗннӗ. Ял ҫыннисемпе ку ыйтусемпе пухӑнса калаҫни те ытлашши мар.

## Ноябрӗн 30-мӗшӗ – Чӑваш Республикин ҫӗнӗ Конституцине йышӑннӑ кун

### Пирӗн пурнӑҫӑн тӗп саккунӗ





2000 ҫулхи ноябрӗн 30-мӗшӗнче Чӑваш Республикин Патшалӑх Канашӗ хӑйӗн черетсӗр ҫирӗм виҫҫӗмӗш сессийӗнче Чӑваш Республикин ҫӗнӗ Конституцине йышӑннӑ. Ҫав кунах Чӑваш Республикин «Чӑваш Республикин Конституцине пурнӑҫа кӗртессин йӗрки ҫинчен» Саккунне йышӑннӑ. Ӑна Чӑваш Ен Президенчӗ Н.В. Федоров 2000 ҫулхи декабрӗн 9-мӗшӗнче алӑ пуснӑ.

Чӑваш Республикин Конституцийӗ тӑнӑҫлӑ шутланать, вӑл пур статьясен енӗпе те Раҫҫей Федерацийӗн Конституцине тата федераллӑ саккунсене тивӗҫтерет. Ҫавӑ та пӗлтерӗшлӗ самант. Республика Конституцине йышӑннӑранпа иртнӗ сакӑр ҫулталӑк хушшинче унта тӑватӑ улшӑну кӑна кӗртнӗ, юлашки хут – 2006 ҫулхи октябрӗн 5-мӗшӗнче.

## Официально

### Проект бюджета одобрен

27 ноября 2008 года состоялись публичные слушания по проекту бюджета Моргаушского района на 2009 год, участники приняли следующие рекомендации:

1. Одобрить проект бюджета Моргаушского района на 2009 год.

2. Рекомендовать Моргаушскому районному Собранию депутатов принять проект бюджета Моргаушского района на 2009 год в установленном порядке в соответствии с требованиями законодательства Российской Федерации, Чувашской Республики и Устава Моргаушского района.

## Партисен пурнӑҫӗнчен

# Стратегиллӗ вуннӑмӗш съезд иртрӗ

Ноябрӗн 20-мӗшӗнче «Единая Россия» партин вуннӑмӗш съезчӗ иртрӗ. Вӑл ҫавна ҫирӗплетсе пачӗ: партин тӗп задачи В. Путин планӗ тесе палӑртнӑ «2020 ҫулччченхи стратегие» пурнӑҫа кӗртесси пулса тӑрать.

«Единая Россия» лидерӗ Владимир Путин хӑйӗн докладӗнче парти тата Раҫҫей Правительстви пурнӑҫа кӗртсе пыракан ӗҫсем ҫинче чарӑнса тӑчӗ. Вӑл палӑртнӑ тӑрӑх, тӗп задача вӑл – ҫынсен пурнӑҫ условийӗсене лайӑхлатасси. Бюджетниксене ӗҫ укҫи, пенсисемпе пособисем малашне те йӗркеллӗ тӳлесе тӑрӗҫ, социаллӑ гарантисемпе тивӗҫтересси те палӑртнӑ пек пулса пырӗ.

**Чӑваш Республикин Президенчӗ, «Единая Россия» партин аслӑ канашӗн членӗ, съезд делегачӗ Николай Федоров съезд пирки ҫапла каласа панӑ:**

– Эпир Раҫҫей Президенчӗпе, Правительство Председателӗпе, унӑн ҫумӗсемпе, федераллӑ министрсемпе куллен тенӗ пекех хутшӑнатпӑр-калаҫатпӑр. Ҫавна каласа пултаратӑп. Правительство Председателӗ тата «Единая Россия» партин лидерӗ каланӑ сӑмах вӑл хамӑрӑн промышленноҫа, ял хуҫалӑхне тата строительствӑна пулӑшассипе калаҫнин итогӗ те пулса тӑрать. Ку вӑл ҫавӑнпа пӗрлех ҫӗр-шыв ертӳҫисемпе «Единая Россия» парти лидерӗ Чӑваш Республикинчи тӗрлӗ отраслӗсенчи предприятисем ыйтни ҫине практикӑлла хурав пани. Палӑртнӑ мерӑсен питӗ актуаллӑ, питӗ кирлӗ, вӗсем тивӗҫлӗ улшӑнусем тума пулӑшмаллах.

Раҫҫей экономики паян чӗр тавар ресурсӗсем ҫинче тытӑнса тӑрать. Ҫӗр-шыв бюджечӗн виҫӗ пайӗнчен икӗ пайӗ нефть тата газ сутнипе ҫыхӑннӑ. Пирӗн Чӑваш Енре кун пек ресурссем ҫук, ҫавӑнпа та Раҫҫей экономики тӳсекен тӑкаксем те пире пырса тивмеҫҫӗ. Ун вырӑнне вара пирӗн ял хуҫалӑхӗнче «харпӑр хӑйӗн хушма хуҫалӑхӗ» текен 38 пин ҫӗнӗ предприяти пур. Официаллӑ чӗлхепе тепӗр майлӑ каласан, ытти регионсемпе танлаштарас пулсан, пирӗн 38 пин пӗчӗк предприяти ытларах. Вӗсем патӗнче ку предприятисене йӗркелес пулать-ха.

Ку тӗслӗхсемпе усӑ курса ҫавна каласшӑн. Енчен те эпир диверсификаци, пӗчӗк предприятисем йӗркелес енӗпе Раҫҫей экономикинчен малта пынӑ пулсан, туса паракан ҫӑмӑллӑхсемпе те ытти регионсемпе танлаштарсан лайӑхрах усӑ курма пултарӑпӑр. Ҫакӑнта пирӗн вӑй тата ӑнӑҫу ҫӑл куҫӗ. Ӑна Раҫҫей Федерацийӗн Правительствин иртнӗ ларӑвӗнче республика ӗҫӗ-хӗлӗн итогӗсене хак пани те ҫирӗплетсе парать. Унта Чӑваш Ене 2007 ҫул итогӗсемпе экономикӑпа социаллӑ аталану итогӗсемпе чи лайӑх регионсен шутне кӗртнӗ.

**– Николай Васильевич, тӗнчере финанспа экономика кризисӗ пырать пулин те, «2020 ҫулччченхи стратеги» кун йӗркинче юлни сире тӗлӗнтермест-и?**

– Пачах та тӗлӗнтермест. Енчен те эпир хамӑрӑн стратегипе плансене пӑрахӑҫлатпӑр пулсан (спортра та ку ҫавӑн пекех), хамӑра тивӗҫтерекен кӑтартусене те тӑваймӑпӑрччӗ. Кӑтартусем ӳсӗмлӗ пулччӑр тесен яланах пысӑк пӗлтерӗшлӗ задачӑсене лартмалла. Шкул ачисемпе тата студентсемпе тӗл пулнӑ май эпӗ яланах ҫапла калатӑп: «Тивӗҫлӗ специалист пулас тата пурнӑҫра ӳсӗмсем тӑвас тесен «пиллӗкпе» вӗренни кӑна ҫителӗксӗр. Ытларах плансем палӑртмалла». Музыкантсем каланӑ тӑрӑх, нотӑсемпе кӑна мар, октавӑсемпе те пурӑнма вӗренмелле. Енчен те Раҫҫей Федерацийӗн граждансем те кун пекех ӑнӑҫлӑ ӗҫлеме пултараҫҫӗ пулсан, ӑнӑҫусем те пулаҫҫех. Енчен те вара эпир хамӑра малтанах япӑх пурнӑҫ шайне ҫитеретпӗр пулсан, лайӑх пурнӑҫ пирки шутламалли те ҫук.

Хавхаланупа пуҫарулӑх – пысӑк психологи ресурсӗ. Вӑл укҫа-тенкӗрен те хаклӑрах. Ҫавӑнпа та обществӑна та, патшалӑх органӗсен влаҫӗсене те пысӑк кӑтартусем тӑвассине, пӗлтерӗшлӗ проектсене пурнӑҫлама явӑҫтармалла.

## Юбилей

### *Саламлатпӑр*



Юратнӑ аннене, кӑмӑллӑ кукамая – Ҫурлатри ялӗнче пурӑнакан **Галина Александровна СПАСКИНАНА** сумлӑ юбилей – 70 ҫул тултарнӑ ятпа чун-чӗререн тухакан чи ӑшӑ сӑмахсемпе саламлатпӑр. Вӑрӑм кунҫул, тулли телей, юман пек ҫирӗп сывлӑх сунатпӑр. Эс пурришӗн савӑнатпӑр, санпа хамӑра телейлӗ туятпӑр. Тайма пуҫ сана пуриншӗн те.

**Саламлаканӗсем: хӗрӗсемпе ывӑлӗ, кӗрӳшӗсем, мӑнукӗсем, ҫывӑх тӑванӗсем.**

Хаклӑ та хисеплӗ ҫыннӑмӑра, тӑванӑмӑра – **Нина Николаевна КАБУРКИНАНА** юбилей ячӗпе чӗререн саламлатпӑр, пурнӑҫра телей, ӑнӑҫу, мӗн пур ыррине кӑна сунатпӑр, мӗн ӗмӗтленни ҫитсе пытӑр.

**Тӑванӗсем, юлташӗсем, пускилсем.**

Поздравляем свою коллегу, товароведа Моргаушского райпо – **СЕМЕНОВУ Ираиду Леонидовну** с юбилеем! Желаем вам крепкого здоровья, побольше светлых и счастливых дней. Пусть будет жизнь полна любовью, заботой близких и теплом друзей.

**С поздравлением коллеги по работе.**